# ЯЛ ĔÇЧЕНĔ

1935 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă

2025 çул

Çурла (август), 1

ЭРНЕКУН

30/10770/№

Хакĕ ирĕклĕ


**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег НИКОЛАЕВ:**

«Сывлăх патне – утăм» проект харăсах темиçе ыйтăва татса парать. Вăл профилактика тата диагностика мероприятийĕсен шутне ÿстерет, чирсене малтанхи тапхăрта оперативлă тупса палăртма пулăшать. Чи кирли вара – граждансене харпăр хăй сывлăхĕшĕн тăрăшассине йăлана кĕртме хистет.

Пирĕн граждансене медицина пулăшăвĕпе вăхăтра тивĕçтермелле. Проект сыватма кăна мар, чирсене малтанхи тапхăрта палăртса сывлăха упрама, хастар пурнăçа тăсма май парать».



# Медицина ĕçченĕсем – Мучар ялĕнче

**Республика Пуçлăхĕ Олег Николаев пуçарнă «Сывлăх патне – утăм» социаллă проектпа килĕшÿллĕн, Тăвайри медицина ĕçченĕсем ытларикун Мучар тăрăхĕнчи çынсене йышăннă. Администраци çурчĕ умне вырнаçтарнă палаткăна тĕрĕсленме 120 çын пынă çав кун, 20-шĕ диспансеризаци витĕр тухнă.**

Опытлă сывлăх хуралçисем юнпа куç пусăмне, холестерин, сахăр шайне палăртрĕç. Кĕлетке йывăрăшĕпе çÿллĕшĕнчен пуçласа ЭКГ тутарса чĕре мĕнле ĕçленине тĕрĕслерĕç. Чăнах та ĕнтĕ, проект чирсене малтанхи тапхăрта палăртма пулăшать. Хăшне-пĕрне анлăрах тĕрĕсленме направлени пачĕç. Сиплев валли рецептсемпе тивĕçтерчĕç специалистсем. «Палатăна кĕретĕн те сывлăха тĕрĕслеттеретĕн, чунри пăшăрханупа тухтăрпа канашлатăн, хăвăрт та меллĕ. Тавтапуçах проектшăн Олег Николаева, сывлăх ĕçченĕсене»,– терĕç ял çыннисем.

Вĕсем хăйсем те парăмра юлман, тĕрĕслев хыççăн тăрăшуллă медицина ĕçченĕсене кăмакара пĕçернĕ апатпа сăйларĕç.

**Валентина ЛАВРОВА,**
**кĕмĕл волонтер. Мучар ялĕ**




## ПРЕСС-ЦЕНТР ПĔЛТЕРЕТ




**Июлĕн 31-мĕшĕ тĕлне Тăвай муниципалитет округĕнчи хуçалăхсем пурĕ пĕрле 999 гектар çинчи пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши тĕш тырă культурисене пухса кĕртнĕ. Çак шутра кĕрхи тулă – 793 гектар, ыраш – 115, урпа – 30, сĕлĕ – 40, пăрçа – 21 гектар. Пĕтĕмпе 3488 тонна тырă çапса илнĕ е кашни гектар вăтамран 34,9 центнер тухăç панă. Уйрăм культурăсем, сăмахран, кĕрхи тулă гектар пуçне 40–60 центнер таран тухăç панă тĕслĕхсем пур.**

**4 гектартан 9 тонна çĕр çырли татса пухнă, тухăç 1 гектар пуçне – 22,5 центнер.**

**Кĕрхи тĕш тырă культурисем акса хăварма 1515 гектар çĕр хатĕрленĕ.**

**Ку вăхăт тĕлне округри предприятисем 6658 тонна е планăн 90 процентĕ чухлĕ утă, 29163 тонна (91,8 процент) сенаж хатĕрленĕ.**

## РЕСПУБЛИКĂРА, ОКРУГРА

- Иртнĕ эрнере Чăваш Республикинче Раççей ял хуçалăх министрĕ Оксана Лут ĕçлĕ çул çÿреври пулнă. Малтанах Чăваш Ен Пуçлăхĕпе Олег Николаевпа регионти ял хуçалăх аталанăвне тата малашлăх тĕллевсене сÿтсе явнă. Унтан Олег Николаевпа Оксана Лут çĕнĕрен уçăлнă «Пехет» агромаркетра, Чăваш патшалăх аграри университетĕнче, хăмла ÿстерессипе ĕçлекен центрта, ăратлă вырăс сутакан Пĕтĕм Раççейри аукционта, Çĕрпÿ округĕнчи Раççей ял хуçалăх министерстви пулăшнипе тунă Чурачăкри шкулта пулнă, юлашкинчен Вăрнар округĕнчи хăмла плантацине çитсе курнă. Министр республикăра ял хуçалăхĕ ăнăçлă аталаннине палăртнă.
- «Чăваш Енри хаваслă çу кунĕсем» проектăн официаллă сайчĕ – яркое лето. чувашия. рф. – ĕçлеме тытăннă. Унта Чăваш Республикинче иртекен мероприятисем çинчен ятарлă платформăра вуласа пĕлме пулать. Усă курма меллĕ пултăр тесе асăннă сайтăн мобильнăй версине те йĕркеленĕ.
- Чăваш Енре кăçал çĕнĕ авиарейссем ĕçе кĕнĕ. Халĕ Шупашкар аэропортĕнчен Махачкала тата Минеральные Воды хулисене çитме май пур. Çакăнсăр пуçне çуллахи рейссемпе Сочине, Калининграда, Нижневартовска вĕçме пулать.
- Ыран Канаш хулин 100 çулхи юбилейĕ. Унăн программинче – тĕрлĕ фестивальсем, конкурссем, концертсем – истори реконструкцийĕ таранах.
- Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев хушăвĕпе 2030 çулччен туризма аталантармалли стартегие çирĕплетнĕ. Асăннă çул тĕлне Чăваш Ене килекен туристсен йышĕ 1,7 миллиона çитмелле. Пĕлтĕр республикăра, статистика кăтартнă тăрăх, 843 пин турист пулнă. Çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнакансем Чăваш Ене машинăпа е автобуспа çеç мар, самолетпа та, Атăл юхан шывĕ тăрăх та килеççĕ.
- Шупашкарта çуллен иртекен «Раççей симĕс ылтăнĕ» фестиваль Чăваш Енри хăмла производствине аталантарассипе çыхăннисĕр пуçне туристсене илĕртекен хăйне евĕр проект та. Сăмах майăн асăнсан, пĕлтĕр «Раççейĕн симĕс ылтăнĕ» фестивале 48 пин çын тата тĕрлĕ регионтан 14 делегаци çитсе курнă. Мероприяти лапамĕнче пурĕ 35,4 пин литр сăра, 9,5 пин литр алкогольсĕр ĕçме тата 7 пин литр ытла кăрчама сутнă.
- 2025 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче Чăваш Енре «Хамăрăннисен вăхăчĕ» («Время СВОих») программа пурнăçланма тытăннă. Чăваш Ен проекта Раççей Президенчĕн халăх хуçалăхĕпе патшалăх службин академийĕн Шупашкарти филиалĕпе пĕрле пурнăçлать. Проект тĕллевĕ – хăйсен вăйĕпе пултарулăхне мирлĕ пурнăçра кăтартма тĕллев тытнă СВО ветеранĕсене патшалăх службинче ĕçлемешкĕн çирĕплетнĕ системăпа вĕрентсе хатĕрлесси. Кунта 33-ĕн пĕлÿ илме тытăннă. Кандидатсене комплекслă майпа суйласа илнĕ.
- 1965 çултанпа Тăвай районĕнчи Тушкилти вăтам шкулта вырăс чĕлхи вĕрентнĕ, «Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ учителĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ, общество ĕçне хастар хутшăннă Василий Ефимович Ефимов (1940–2023, Шупашкар районĕ, Çÿлтикасси ялĕ) çуралнăранпа августăн 1-мĕшĕнче 85 çул çитрĕ.

**Иван ГЛАДКОВ**
**хатĕрленĕ**




## Хисеплĕ вулакансем!

**«Ял ĕçченĕ» хаçата 2025 çулхи иккĕмĕш çур çулшăн çырăнтарасси малалла пырать.**
**Ăна почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсем урлă 4 уйăхлăха илсе тăмашкăн 450 тенкĕ те 64 пус тÿлемелле.**
**Альтернативлă йĕркепе редакцие килсе е кооператорсен магазинĕсем урлă пилĕк уйăха çырăнмалли хак – 300 тенкĕ.**

# Çăлкуççемшĕн тимлени – малашлăхшăн!

**Тăвай округĕнче республикăри «Хура çăл» çăлкуçĕсем» экологипе географи фестивалĕ иртнĕ. Ăна ЧР çутçанталăк ресурсĕсемпе экологи министерстви, Вырăс географи обществин республикăри уйрăмĕ тата Тăвай муниципалитет округĕн администрацийĕ пулăшнипе «Хура çăл» çăлкуçĕсен территорийĕнче виççĕмĕш çул йĕркеленĕ.**




Кунта экологи ыйтăвĕсене тимлĕх уйăрас, уйрăммăн илсен çăлкуççене упрас, хăтлăлатас ĕççене анлăлатса пырас тата çутçанталăк еткерлĕхне сыхласа хăварас тĕллев тĕп вырăнта тăнă.

Кăçалхи мероприятие юбилейлă датăсене – Чăваш автономине105 çул, Аслă Çĕнтерĕве 80 çул, Вырăс географи обществине 180, Тăвай округĕ йĕркеленнĕренпе 90 çул çитнисене халалланă. Тĕрлĕ пулăмпа пуян пулнă Чăваш Республикин Пуçлăхĕ пуçарнă «Чăваш Енри хаваслă çу кунĕсем» ятлă социаллă çĕнĕ проектпа килĕшӳллĕн иртнĕ мероприяти. Кашниех хăйĕн кăмăлне килекеннине тупма пултарнă тата кашниех тăван çут çанталăка паян çамрăксенчен пысăк пулăшу кирлине ăнланнă.

Фестивале Тăвай округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов, ЧР çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министрĕн çумĕ Елена Хомченко, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Леонид Пронин, РГОн Чăваш Енри уйрăмĕн председателĕ Инна Никонорова, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ ученăйĕсем, Вăрмар, Канаш, Йĕпреç, Красноармейски округĕсенчи волонтерсем, вĕренекенсем, активистсем, экологсем хутшăннă.




«Çак фестиваль «Экологи» наци проекчĕн тĕллевĕсене пурнăçлама тӳпе хывни тата Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев ертсе пынипе республика çăлкуçĕсене тĕпчесе цифрăлас ĕçĕн пĕлтерĕшлĕ пайĕ. Тăвай округĕнче те эпир çăлкуççемпе ун таврашĕнчи территорисене хăтлăлатассине пысăк тимлĕх уйăратпăр,– тенĕ муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов. – Тĕслĕхрен, иртнĕ çул пуçару бюджечĕн проекчĕ шайĕнче Енĕш Нăрваш ялĕнчи Сикте çăлкуçĕ таврашне çĕнетсе тирпейленĕ, Чутей ялĕнче çăлкуç çывăхĕнче купель уçнă, Кармалта çак территорие хăтлăлатнă. Пирĕн тĕллев – çăлкуççене пулас ăрусем валли упраса хăварасси. Хура çăл – çутçанталăк еткерне кăтартакан чĕрĕ истори. Çак хăйне евĕрлĕ кĕтесе сыхласа хăварас тесе эпир малалла та пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр. Пĕрле эпир тĕнчене тасарах тăвăпăр!»

Асăннă мероприяти пĕчĕк юханшывсемпе çăлкуççене пăхса тăмаллине çирĕплетекен тĕслĕх. Вĕсем ăшăхланса ан кайччăр тесе маларахри çулсенче пĕрлехи проектсене çул панă. Фестивале хутшăнакансем тата тухса калаçакансем çак тĕлĕнмелле çут çанталăк кĕтесĕ çулсерен хăтлăланса пынине палăртнă. Тасатнă хыççăн шыв юхăмĕ вăйланнă. Çăл шывĕ тăрă та сиплĕ.



Фестивальте çăлкуççене тĕпчессипе тăратнă наукăпа тĕпчев ĕçĕсен «Чăваш Ен – пин-пин çăлкуç çĕршывĕ» республика конкурсĕн çĕнтерӳçисене чысланă. Вĕсене дипломсемпе асăнмалăх парнесем панă. Вĕсен хушшинче Тăвай енрен – Ксения Васильева (Тăрмăш шкулĕ), Юлия Хайдукова (муниципалитет округĕ);

Софья Симонович, Анна Федорова, Евгения Васильева, Анастасия Васильева; Александра Фирсова, Дарья Фирсова (Совет Союзĕн Геройĕ П.Х.Бухтулов ячĕллĕ Тăвайри вăтам шкул).

«Асамат кĕперĕ» ача садĕнчи Надежда Иванова воспитательница кăçал та мала тухнă. Иртнĕ çул Хура çăлпа, кăçал Сăхăтпуçĕнчи Пикенеç çăлĕпе çыхăнтарнă хăйĕн тĕпчев ĕçне.

Фестиваль вăхăтĕнче çут çанталăка сыхлассипе çыхăннă конкурссене тĕрлĕ округсенчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисен командисем хутшăннă. Кăсăклă квест-вăйăсенче станцисем тăрăх çулçӳреве тухса, нумай çĕнни пĕлме пултарнă. Çавăн пекех Чăваш Республикин, Тăвай округĕн спилс-карттисене хăвăрт пухассипе тупăшнă. Унтан вара пурте пĕрле çăлкуççем таврашĕнчи территорие çӳп-çапран тасатнă.

Çак хăтлăх кӳнĕ территори – пилĕк çăлкуç тапса тăракан, вăй-хăват паракан тĕлĕнмелле вырăн. Фестиваль хăнисем вĕсен уйрăмлăхĕсене тишкернĕ, пĕрлехи ĕçпе пулса иртекен ырă улшăнусене курса савăннă. Тасатса тирпейленĕ çĕрте курса çӳрени пурне те хавхалану кӳнĕ. Сиплĕ çăл шывĕнчен пĕçернĕ хуратул пăтти тутлă пулнине палăртса, Андрей Федоров волонтера мухтаса илнĕ.

**Раиса ШУМОВА**

# Олег Николаев хушăвĕпе

**Сергей Артамонов ертсе пынипе иртнĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче вырăнта ял хуçлăх таварĕ туса илекенсен 24 уйăхран аслă мар măйракаллă шултра выльăх çитĕнтерсе самăртнăшăн субсиди памалли программăпа субсиди илмелли майсене сарасси çинчен калакан постановлени проектне ырласа йышăннă.**

«2023 çулта регионта пуçласа фермерсене măйракаллă шултра выльăх самăртнăшăн субсиди памалли программа вăя кĕнĕ. Ку мера Чăваш Енре ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсене палăрмаллах пулăшу панă. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев хушнипе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен пысăк тăкакĕсене шута илсе тата çĕршывăн апат-çимĕç суверинитетне çирĕплетме ăна 2025 çулта çĕнĕрен пуçарса яма йышăннă»,– палăртнă ЧР Ял хуçалăх министрĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Инна Волкова.

Çĕнĕ правилăсем Чăваш Енре регистрациленнĕ тата субсиди илме тăрăшакан фермерсене çулталăк вĕçлениччен măйракаллă шултра выльăх ашĕ туса илсе ăна республикăра тата çавăн пекех кӳршĕллĕ регионсен рынокĕсенче çĕршыври суту-илӳ площадкисенче сутма майсем туса параççĕ.

Асăннă йышăну Чăваш Енри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсене пулăшу парассине вăйлатать тата АПКн çынсемшĕн питĕ кирлĕ экономика секторне çирĕппĕн аталанма майсем туса парать. 2025 çулта асăннă программăна пурнăçлама 44,7 миллион тенкĕ уйăрма пăхнă.

Палăртма кăмăллă, кăçал халех ĕнтĕ ял хуçалăх таварĕ туса илекен виçĕ предприятие 4,6 миллион тенкĕлĕх (232 тонна ытла выльăх ашĕшĕн) патшалăх пулăшăвĕ панă. Çулталăк вĕçлениччен вара тата 62 предприятие субсиди пама палăртаççĕ.

**ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн пресс-службри**

ЭПИР ПĔРЛЕ

# Тылпа фронт пĕрлĕхĕ

**Енĕш Нăрваш территори уйрăмĕнчи волонтерсем чун-чĕре хушнипе ятарлă çар операцийĕнчи ентешсем валли маскировка тетелĕсем çыхса ăсатаççĕ.**



Вĕсем хамăр боецсемшĕн те, çар техникишĕн те питĕ кирлĕ хӳтлĕх хатĕрĕсем.

Пирĕн ĕç йăлтах материалсенчен пуçланать. Пĕрлехи вăйпа пухнă гражданĕсен парнисене, укçа-тенкине, çавăн пекех уйрăм çынсен пулăшăвне пула пирĕн пата тетелсем валли тĕрлĕ пусма килет. Вĕсене вăрăм хăюсем çине касса хуратпăр. Материалăн тĕсĕпе фактурине фронт ыйтнипе килĕшӳллĕн суйласа илетпĕр.

Пирĕн хăтлă штаба, ĕçлемелли пӳлĕме тĕрлĕ ӳсĕмри, тĕрлĕ професси çыннисем пухăнаççĕ. Шкул ачисенчен пуçласа пенсионерсем, вĕрентекенсенчен пуçласа инженерсем таранах – кашниех хăйĕн тӳпине хывма хатĕр. Эпир шăплăхра е пурнăç çинчен калаçса ĕçлетпĕр-и, анчах яланах пĕр шухăш: фронта пулăшмалла!

Тетел хатĕр пулсан çула ăсанать. Эпир шанчăклă волонтерсемпе тачă çыхăнура: Сергей Ивановпа Сергей Павлов пирĕн тиеве чи кирлисен аллине тĕрĕс илсе çитереççĕ. Çак кунсенче 15 михĕ маскировка тетелĕ (3х6 м) тиесе ятăмăр.

Пирĕн маскировка тетелĕсем тылпа фронт пĕрлĕхĕн символĕ. Ку вăл – Тăван çĕршывран килнĕ хыпар, хамăрăн хӳтĕлевçĕсене асра тытнине, юратнине, килте кĕтнине пĕлтерекен паллă.

**Светлана МИХАЙЛОВА,**
**хĕрарăмсен совечĕн ертӳçи**

2025 – ГОД ПАТРИОТИЗМА И ПОБЕДЫ

# В семнадцать мальчишеских лет...

**Все меньше и меньше в год 80-летия Победы остается живущих непосредственных участников Великой Отечественной войны. Героическую страницу в историю Советского Союза и всего мирового сообщества вписали они за четыре страшных года.**

**Нам нужно хранить память о тех, кто погиб, защищая Родину, и чтить ветеранов. Война унесла много жизней, принесла много горя и страданий. Воевали все – от мала до велика. Мы с большой скорбью и в то же время с большой гордостью вспоминаем всех фронтовиков. Идя в бой, бойцы думали о своих близких, это придавало им силы. Они знали, что нельзя отступать, всем хотелось остаться в живых и вернуться домой.**


Иван и Елизавета Савиновы

Иван Савинов солдатом стал через пять месяцев после исполнения ему 17 лет. Уроженец деревни выс. Октября Янтиковского района был призван в ряды Красной Армии районным военным комиссариатом 15 января 1943 года. С января по июнь 1943 года курсантом 137 учебного полка прошел обучение на командира стрелкового отделения.

Свое первое боевое крещение Иван Савинов принял в июне 1943 года. 16 сентября того же года получил тяжелое осколочное ранение в правое бедро и был направлен на лечение в госпиталь ЭГ-3591 г. Семипалатинск. После излечения в госпитале в декабре 1943 года был направлен командиром саперного отделения инженерно-минной роты 47 механизированной Духовщинской Краснознаменной ордена Суворова II степени бригады 5-й армии в составе 3-го Белорусского фронта.

22 января 1945 года младший сержант И.С.Савинов, действуя в составе разведывательной части при 1-й механизированной саперной бригаде, одним из первых обнаружил заложенный фугас с часовым замыкателем под мостом южнее населенного пункта Богуншевок, приготовленный противником к взрыву. Бесстрашно и умело обезвредил его, чем обеспечил нормальное движение техники 1-й механизированной саперной бригады. Первым ворвался в Богуншевок и завязал неравный уличный бой с численно превосходящим противником. Действуя смело и решительно, взял в плен двух солдат противника. За этот подвиг младший сержант И.С.Савинов удостоен ордена Красной Звезды.

Младший сержант, командир саперного отделения инженерно-минной роты 47 механизированной Духовщинской Краснознаменной ордена Суворова II степени бригады 5-й армии в составе 3-го Белорусского фронта прошел фронтовыми дорогами по Белоруссии, Прибалтике, Восточной Пруссии до Кенигсберга. Боевой путь фронтовика завершился в поверженном Кенигсберге. В апрельские дни 1945 года отважный командир отделения участвовал в штурме города-крепости.

13 февраля 1946 года на основании указа Председателя Верховного Совета СССР от 25.09.1945 г. Иван Сергеевич Савинов демобилизован в запас.

За доблесть и мужество, проявленные в боях Великой Отечественной войны и в ходе штурма города-крепости Кенигсберг, Иван Сергеевич награжден орденом Красной Звезды, орденом Отечественной войны II степени, медалями «За боевые заслуги», «За взятие Кенигсберга», «За победу над Германией в Великой Отечественной войне 1941–1945 г.г.», юбилейными медалями.

Иван Савинов родился 21 августа 1925 года в деревне Тенеево. После окончания Индырчской семилетней школы через год началась Великая Отечественная война. В семье Савиновых (Сергеевых) было пятеро детей. Его старшего брата Павла в начале войны призвали на фронт. Второй брат Василий проходил срочную службу на флоте. Сестру Марию призвали в 1942 году. Ивану было 16 лет, они вместе со школьными друзьями замещали ушедших на фронт мужчин, трудились в колхозе. С 28 октября 1941 г. по январь 1942 г. работали на строительстве Сурского и Казанского оборонительных рубежей.

После возвращения с фронта продолжил трудиться в колхозе. В 1949 году в Канаше окончил курсы ФЗО, получил специальность электромеханика. Работал на Октябрьской ГЭС, а после его закрытия в 1966 году – электромехаником в колхозе «Новый путь», с 1978 года до ухода на пенсию – газовиком.

В 1948 году Иван Сергеевич создал крепкую и дружную семью с Елизаветой Сергеевной. Они с супругой родили и воспитали восьмерых детей: пять сыновей и три дочери. Сейчас у них в семьях 16 внуков, 23 правнука.

2 января 1993 года нами любимый отец, брат и прадед Иван Сергеевич Савинов ушел из жизни. Ему было всего 67 лет.

Ветерану войны в августе этого года исполнилось бы 100 лет.

**Владимир СЕРГЕЕВ**


Дети Савиновых

# Кун йĕркинче – паян пурнăçламалли ĕçсем

**Тăвай муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Олег Ломоносов эрне пуçламăшĕнче анлă планерка ирттернĕ. Хальхи вăхăтра чи пирвай пурнăçламалли ĕçсен шутĕнче тырпул пухса кĕртесси тата выльăх апачĕ хатĕрлесси пулнине палăртнă. Ял хуçалăхĕпе экологи пайĕн начальникĕ Николай Краснов пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 28-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсем 6930 тонна утă тата 20510 тонна сенаж хатĕрлесе хунă. Вырма пынă май, тырă çапса илнĕ лаптăксем хушăнсах пыраççĕ, тухăç начар мар.**

Олег Анатольевич выльăх апачĕн пахалăхне лаборатори условийĕсенче вăхăтра палăртма кирлине асăрхаттарнă, унран выльăхсен сывлăхĕ тата выльăх-чĕрлĕх отраслĕ ăнăçлă аталанасси килет, тенĕ.

Пуçару бюджечĕсен проекчĕсене пурнăçлассипе ĕç-пуç мĕнле пыни çинчен администраци пуçлăхĕн заместителĕ – территорисене тирпей-илем кĕртессипе тата аталантарассипе ĕçлекен управлени начальникĕ Вероника Николаева каласа панă. Ку вăхăт тĕлне 89 проектран 57-шне пурнăçа кĕртнĕ, тепĕр 18-шĕпе халĕ тимлеççĕ, 16-шне вара пуçăнайман-ха.

Çакна май округ пуçлăхĕ территори пайĕсен начальникĕсене кашни проектах вăхăтра ĕçе кĕртессипе çине тăма, подрядчиксемпе çыхăнса, сроксене пăхăнма хушнă. Кирлĕ пулсан, претензи ĕçĕ те пуçармалла, анчах тĕп тĕллев палăртнă результатсем пулмалла.

Вĕрентӳ учрежденийĕсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлес ĕçсемпе администраци пуçлăхĕн заместителĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлакан – вĕрентӳ пайĕн начальникĕ Ирина Семенова паллаштарнă.

2025 çулхи пĕрремĕш çур çулта халăха диспансеризаци кăларнин итогĕсем çинчен тата Чăваш Ен Пуçлăхĕн Олег Николаевăн «Сывлăх патне – утăм» проектне пурнăçа епле кĕртнипе Канашри ММЦ тĕп врачĕ Рената Федорова каласа панă. Диспансеризацин тĕп тĕллевĕ – чир-чĕре малтан палăртма май килни, çакă хастар пурнăçпа вăрăм ĕмĕр никĕсĕ пулса тăрать, тенĕ. Тĕп врач ӳсĕмĕпе 18–45 çулсенчи çынсем хăйсен сывлăхĕшĕн çителĕксĕр тимленине кăтартса панă.

Олег Ломоносов çавăн пекех алкоголизмпа кĕрешес ĕçе вăйлатма кирлине, ку тĕлĕшпе те комплекслă ĕçлемелли çине пусăм тунă. «Çынсен сывлăхĕ – пирĕн приоритет, пирĕн сывă пурнăç йĕркине пропагандăлассипе тата сиенлĕ йăласемпе кĕрешессипе пур майпа та усă курмалла»,– тенĕ вăл.

«Чăваш Енĕн хаваслă çу кунĕсем» социаллă проекта пурнăçа кĕртессипе епле ĕçлени çинчен культура, социаллă аталану тата архив ĕçĕн пай начальникĕ Оксана Кириллова тĕплĕн каласа кăтартнă. 40 мероприятие йĕркелесе ирттернĕ те ĕнтĕ. Сайт çине пурĕ 88 мероприяти кĕртнĕ. Асăннă проекта вырăнта пурăнакансем те, хăнасем те хутшăнма пултараççĕ. Оксана Алексеевна пурне те пирĕн округра иртекен хаваслă мероприятисене хутшăнма чĕнсе каланă. Çывăх вăхăтри çакăн пек мероприятисен шутĕнче – Патшалăх ялавĕн кунне, Физкультурник тата Сывлăшпа десант-çарĕсен кунĕсене халалланă мероприятисем.

Ытти ыйтусем те тимлĕхре пулнă.

**Иван ИВАНОВ**

# Хăрушсăрлăха мала хурса

**Пушарпа кĕрешесси пурнăçра яланах чи пĕлтерĕшлĕ ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Çак пысăк инкекрен сыхланас тата ăна вăхăтра сирес тĕллевпе республикăра пушар хуралне вăйлатсах пыраççĕ. Акă юлашки пилĕк çулта пушарпа кĕрешекен службăн пурлăхпа техника никĕсне çĕнетме 265 миллион тенкĕ уйăрса панă. 2025 çулта кăна тĕрлĕ çулпа пысăк çӳреслĕхлĕ пушар сӳнтермелли автоцистернăсем тата пулăшу техники туянма республика 71 миллион тенкĕ уйăрнă.**

Чăваш Енĕн пушар хуралĕ паянхи куна 222 подразделенирен тăрать. Икĕ пин ытла çын службăна тухать. Ирĕке кайнă вут-кăварпа кĕрешме Чăваш Енре пурĕ 421 единица техника пур. 2020–2024 çулсенче пушар чаçĕсен 4 уйрăм постне йĕркеленĕ. 2025 çул пуçланнăранпа вара кунашкал постсем тата иккĕ уçăлнă. Çитес виçĕ çулта пушарпа кĕрешмелли 8 подразделение тата ирĕклĕ пушар хуралĕн 42 подразделенине çĕнĕрен йĕркелеме палăртаççĕ.

Уйрăм тимлĕхре вăрман пушарĕсем тата вĕсенчен сыхланасси. Паянхи куна вăрманти пушарсемпе кĕрешме республикăра 42 станци службăра тăрать. Вĕсенче пушар сӳнтермелли 155 техника, 887 единица ятарлă оборудовани тата 11 единица БПЛА пур. Çакăнпа пĕрлех вăрманти пушарсене вăхăтра тупса палăртма республикăра видеомониторинг тытăмĕ йĕркеленĕ.

Юлашки вăхăтра РФ МЧСĕн Чăваш Республикинчи подразделенийĕсене тĕрлĕ йывăр çулпа çӳреме пултаракан 4 «Нива» автомашина, тулли приводлă «Соболь» тата аварипе çăлав оборудованиллĕ КамАЗ пушар автоцистерни килсе çитнĕ.

Пушарсем çулталăкăн кирек хăш сезонĕнче те пысăк тимлĕх ыйтаççĕ, çу кунĕсенче вара уйрăмах. Кăçал паянхи кун тĕлне округ территорийĕнче 7 пушар (пĕлтĕр ку тапхăрта 8 пулнă) тухнине регистрациленĕ. Шел те, вут-çулăмра çынсен пурнăçĕ те таталнă.

– Халĕ хуçалăхсенче вырма ĕçĕсем пыраççĕ. Çак вăхăтра пушар хăрушсăрлăхĕн йĕркисене çирĕп пăхăнмаллине уйрăмах асра тытни кирлĕ. Çакна та манар мар: хальхи вăхăтра республикăра пушара хирĕçле уйрăм режим вăйра тăрать, ку тапхăрта çынсене вăрмансене кĕме чарнă, кану вырăнĕсенче кăвайт чĕртме, çӳп-çапа тата тырă хăмăлне, типĕ курăка çунтарма юрамасть,– çапла асăрхаттараççĕ Тăвайри пушар чаçĕнче ĕçлекенсем.

**Иван ГЛАДКОВ**

# Манăн ял - манăн тăван кил

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

# Пурнăç тĕллевĕ – «Малалла кăна!»

**Иртеç кунсем, иртеç çулсем,**
**Сăн-пит çинче кун-çул утти.**
**Тавах, аттем, тавах, аннем,**
**Эсир – тăван кĕтес çути.**

2010 çулхи августăн 3-мĕшĕнче «Ял ĕçченĕ» хаçатра «Лар, аттеçĕм, юнашар» интервью жанрĕпе çырнă материал пичетленсе тухнăччĕ. Калаçăва çак ыйтуран пуçланăччĕ:

– Мĕнлерех пулнă-ши санăн ачалăху, атте? Акă мĕн хуравланă:

– Ачалăх вăл ачалăхах. Унта савăнăçĕ те, пăшăрханăвĕ те пĕр çĕрте. Пиччесемпе шăллăмсем халĕ те куç умĕнчех. Эпир, ултă пĕр тăван, атте-анне çуначĕ айĕнчен вĕçсе тухрăмăр. Аннене аса илсенех чун хурланать, питĕ хитреччĕ те ыра кăмăллăччĕ вăл пирĕн. Шел, кун-çулĕ ир татăлчĕ. Атте çирĕпчĕ, 94 çул таран пурăнчĕ.

... Ашшĕ Кузьма Михайлович, Ванюкпа Герман аслă пиччĕшĕсем тăшмана хирĕç фронтра çапăçнă. Килте амăшĕ, пĕчĕк шăллĕсем юлнă. 1942 çулта 76 ĕç кунĕ тунă 11 çулхи Виталий. Амăшĕ чирлесен ун вырăнне фермăна сурăх пăхма çӳренĕ, лавпа тислĕк тăкнă. Шкула пăрахма тивнĕ. Çуллахи кунсенче каçхине ирччен колхоз лашисене курăк çитерме уя илсе тухнă. Ытларах арçын ачасем çӳренĕ унта. Пĕррехинче ир кӳлĕм кăвайт сӳнесрен юлташĕсем кивĕ улăм купи патне яраççĕ ăна. Вăл пĕр ытам улăм туртса илет кăна, унта кашкăр шăмă кăшласа выртнине курах кайнă. Хăрамаллипех хăранă! Ача тăнне çухатнă. Кашкăрĕ хăй хăраса тарнă.

Вăхăт иртнĕ май çамрăк техника патне туртăннă. Тăвай МТСне трактористсен курсне çыранать. Часах Виталий колхоз уйне ака-сухана тухать, хуçалăхри ытти ĕçсенче хастарлăх кăтартать.

1950–1953 çулсенче çар хĕсметĕнче тăрать. Салтак явапне пурнăçлама Баку хулине лекет. Чăваш ачи хăй те «хĕвеллĕ вырăнтан» пулнăха, анчах çак енчи çанталăк тата шăрăхраххине пĕрмай аса илетчĕ. Тинĕс çывăх пулни çеç хăтарнă.

1953 çулхи март уйăхĕнчи «На страже» ятлă çар хаçатĕнчен: «Мастерски овладел специальностью рядовой Михайлов. Благодаря отличным техническим знаниям, умелому уходу и эксплуатации автомашины, воин добился значительного увеличения пробега авторезины. Комсомолец В.Михайлов награжден знаком «Отличный шофер». Командир части предоставил передовому воину кратковременный отпуск с поездкой на родину». Сăн ӳкерчĕкпе çакăн пек содержаниллĕ материал пичетленнĕ Тăвай каччи çинчен. Шухăшланă та Виталий, киле кайса çӳриччен, вăхăчĕ сахал тата, отпуск шучĕпе çар службин срокне чакарма ыйтнă. Чăнах та, иртерех янă ăна киле. Е тата, хĕсмет вăхăтĕнчех çар автоинспекторĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухать вăл. Унтан хăй полкра шоферсене вĕрентсе хатĕрлеме пуçлать. Служба вăхăчĕ тухсан тӳрех Герман пиччĕшĕ патне Тула облаçĕнчи Белев хулине кĕрет. Виçĕ çул хушши инвалидсен çуртĕнче шоферта тимлет. Çакăнта юлма кăмăл та пулнă, анчах ашшĕ ачисене яла чĕнет, пулăшу ыйтать.



***Виталий Кузьмич Михайлов 1930 çулхи çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче Тăвай ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Мăшăрĕ – Лидия Михайловна, педагогика ĕçĕн ветеранĕ, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕ. Ачисем: Надежда, Юрий, Луиза. Хăйсен кун-çулне шкул ĕçне халалланă. Профессийĕпе инженер-механик. Чăваш ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă. Тăвайри вăтам шкулта производство вĕрентĕвĕн мастерĕнче тăрăшнă. Ĕç стажĕ 40 çул ытла, I класлă водитель.***
***«Ĕç ветеранĕ», «1941–1945 çулсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн» медаль, «Вĕрентӳ отличникĕ», ДОСААФ Тĕп комитечĕн «Хисеп палли» знакне икĕ хутчен тивĕçнĕ. Грамотăсем пирки асăнма та кирлĕ мар. Вĕсем унăн темĕн чухлех.***
***Пурнăç девизĕ: «Малалла кăна!»***
***Юратнă юрри: «Вĕç, вĕç, куккук», вĕç, куккук».***
***2018 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче пурнăçран уйрăлнă.***

Яла таврăнсан Канашри АТПна вырнаçнă Виталий. 1956–1957 çулсенче автобус рулĕ умне ларса кунсерен рейса тухнă, пассажирсене çитес çĕре çитернĕ. Техникăна ялан тирпейлĕ тытнă, ыттисенчен те çавнах ыйтнă.

«Пурнăç çынни» текен каларăш пур халăхра. Чăнах та, чăннипех çавăн пек калама пулать атте çинчен. Вăл хăйĕн ĕмĕрне тĕллевсем лартса пурăннă. Хăш-пĕрисем пурнăçлама пултарайманнисем те пулнă, анчах вĕсем малашлăх çулне уçса пыма пулăшнă.

60-мĕш çулсем. Тăвай шкулĕнче тракторпа автомобиль класĕ уçаççĕ. Çав вăхăтри районти I тата II креслă водительсем ахăртнех пурте Виталий Кузьмич алли витĕр тухнă. Кăнтăрла вăл шкулта ачасене вĕрентнĕ, каçхине спортпа техника клубĕнче (СТК) – çитĕннисене. Каярах, ялта Канашри автошкул филиалĕ уçăлсан, унта нумай çул ĕçленĕ. Темиçе ушкăн вĕрентсе кăларнă. Часах «Автодело» ĕçне хĕрсем те вĕренме пуçланă. Занятисене иртерме пĕлнĕ, теорипе практикăна пĕрле çыхăнтарса çирĕп пĕлӳ панă. Ача чунне ăнланма, курма пĕлнĕ вăл. Чăнчăн вĕрентекенĕн çапла пулмалла та.

Ырă ĕçĕн – ырă çимĕçĕ. Унăн вĕренекенĕсем хушшинче вун-вун çын республика шайĕнчи тава тивĕçлĕ хисеплĕ ĕçченсем. Районти предприятисенче, колхоз-совхозсенче ĕçпе палăрнă, мухтава тивĕçнĕ çӳллĕ шайри специалистсем вăй хунă.



1979 ç. Михайловсем вĕрентекенсен конференцийĕнче

Умра 2000 çулхи «Ял ĕçченĕ» хаçатăн августăн 4-мĕшĕнчи номерĕ. И.И.Соловьев журналист «Тăвай Кулибинĕ» ятлă очерк пичетлесе кăларнă. Унти йĕркесем: «Техника чунне никам та ун чухлĕ ăнланмасть пуль. Çĕршер çамрăка пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнă.

Виталий Кузьмич темиçе мини-трактор, çăмăл машина, кран, аэроçуна ăсталанă. Чăннипех Тăвай Кулибинĕ».

Çын пурнăçĕ вĕçĕмсĕр мар. Епле пурăнасси çеç хамăртан килет. Самана уттинчен юлмасăр пымаллине пĕлнĕ атте. Йывăр самантсем пулсан та «малалла кăна!» теме юратнă, çакăнпа ыттисене те хавхалантарнă. Ăшри темле асамлă вăй-хăватпа çынсене хăй патне туртнă вăл. Ватти-вĕттипе пĕр чĕлхе тупма пултарнă. Хаваслăхĕпе шӳтлĕхĕ те унраччĕ. Балалайкăпа купăс янратсан кил хăнисем ташша ямасăр чăтаймастчĕç.

1995 çул. Шупашкартан «Çемье» телепередача ӳкерме килчĕç. Ертсе пыраканĕ Михаил Желтов (Сарри Мишши), сăхăтпуçсемччĕ. Çав кун вара атте ăсталанă пĕтĕм техникăна ӳкерсе кайрĕç. Пĕчĕк тракторсемпе чупса кăтартрăмăр. Кĕçех сенкер экран çине кăларăм эфира тухрĕ. Кассета çине çырса илтĕмĕр. Çапла вара атте сăнĕпе сасси упранса юлчĕç.

Кил тесе пурăнмалли вырăна кăна каламаççĕ. Кил – вăл çемье вырнаçнă йăва. Кунта темиçе ăру пурнăç тути-масине ăнланса илме пултарнă. Ырă чăваш йăлипе, ывăлсен хăйсен ĕмĕрĕнче çурт лартмалла. Михайловсен ашшĕн кил-çурчĕ çемьеленнĕ ывăлĕсене тăвăр пулнă. Ялта Мулкач (Зайцев) текен пурăннă, хуçисем тухса кайнă ялтан, пушă паçма. Атте Эль шывĕ хĕрринче вырнаçнă çак пĕчĕк кивĕ пӳрте сутăн илет. Пилĕк стеналлă йывăç пӳрт лартма тытăнать çемйипе. Ĕçĕ нумай: пĕренисене турттарса килмелле, чутламалла, ухтармалла. Тăванĕсем, юлташĕсем пулăшнă. Атте хăй те ăста пулнă. Тĕлĕнмелле те, хăй тунă станокпа хăмасене яп-яка çурса кăларатчĕ.

Эпĕ, пĕчĕкскер, урай хăми сарсанах ун тăрăх пĕрремĕш чупса кайнă иккен. Мĕнле савăннă çак самантпа аттепе анне! 1958 çулта çĕнĕ çурта пурăнма куçнă çемье.

«Паян чул кăларма кайрăмăр – пĕр пысăк купа туса хатĕрлесе хăвартăмăр. Ку никĕс яма çитмĕ. Тата нумай кăлармалла»,– тесе çырнă атте хăйĕн кун кĕнекинче (дневникĕнче). Вăл вара самаях хулăн унăн.

Тăвай ялĕ çумĕнчи тарăн çырмасенчен шурă чул кăларнă халăх. Тем пысăкăш хăпса



Автоĕç занятийĕнче

тухнă çĕр айĕнчен. Ăна ватнă, пайланă. Йывăр ĕç пулнă. Çапла нимелле, йышпа ĕçлесе ялта кил-çурт çавăрнă çынсем.

Мĕн вăл телей? Çак ыйту çине кашни тĕрлĕрен хуравлама пултарать. Маншăн телей – аттепе анне, çывăх çынсем юнашар пулни. Чи хакли – тăван ял, тăван кил.

Кил илемĕ – килĕшӳ. Сăмах май, аннепе атте пĕрле 62 çул телейлĕ пурăнса ирттерчĕç. Ĕçчен, сăпайлă, тӳрĕ чунлă пулма вĕрентсе ӳстерчĕç вĕсем пире. Пурăннă пулсан, Виталий Кузьмич Михайлов августăн 2-мĕшĕнче 95 çул тултаратчĕ. Анне, Лидия Михайловна, ырă сывах-ха. Унăн сывлăхне тĕрĕслеме кăçал та тухтăрсем икĕ хутчен киле пырса кайрĕç. Ватăсен сывлăхне упрама пулăшнăшăн республика ертӳлĕхне чунтанах тав тăвать вăл. Чăваш Ен Пуçлăхĕ пуçарнă «Сывлăх патне утăм» социаллă проект ĕçĕ-хĕлĕпе те кăмăлласах паллашать.

Малашлăх курăмлă çынсен çирĕп кăмăлне пула пурнăçланать. Вĕсем пуласлăха ĕненеççĕ çеç мар, тăрăшсах тĕллевсем патне талпăнаççĕ. Çакăн пек çынсене ĕç династийĕ пĕрлештерет. Ачисем ашшĕ-амăшĕн çулĕпе кайса вĕсен ĕçне малалла тăснă тĕслĕхсем Тăвай енре сахал мар. Виталий Кузьмичăн ĕç çулне илсессĕн те, вăл пултарулă педагог-наставник, новатор пулнине палăртма пулать. Паянхи кун та Михайловсемпе Кузьминсем вĕрентекенĕн çутă та таса ятне çӳлте тытса пыраççĕ. «Пурнăçăмăра яланлăхах шкула халаллатпăр, чĕремĕре – ачасене!»– теççĕ вĕсем.

Вĕрентекен ĕçне чунтан парăннине, çитĕнекен ăрăва воспитани парас тĕлĕшпе пысăк тӳпе хывнине пысăка хурса хакласа, 2023 çулта Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев ĕç династине Тав çырăвĕ парса чысланă. Сăмах майăн, çак йăхри çынсен педагогикăри ĕç стажĕ 350 çула яхăн.

Урамсем, кил-çуртсем... Чунлă вĕсем тем тесен те. Лаштра вату йăмрасем темле вăрттăнлăхсем тытаççĕ. Миçе ăру пурăнса иртгернĕ çак çĕр çинче? Камсем вĕсем, мĕнлерех çынсем пулнă? Эпир те çавсен пĕр пĕчĕк пайăркисем. Кайăк йăвисем евĕр вырнаçса ларнă ял витĕр юхса тухакан шыв хĕррисемпе пӳртсем. Урамсенче пушанса юлнă килсем нумай. Ăçта вĕçсе тухса кайнă хуçисем? Е яланлăхах пăрахнă тăван вырăнĕсене? Эрешлесе илемлетнĕ кантăксенчен çынсем урамалла пăхса пурнăçпа киленнĕ. Тул çутăлнă, каç пулнă.

Ырă ĕçсем туса хăварма васканă кашниех. Çавсен шутĕнче В.К.Михайлов та пурнăç çулне тĕрĕс утса тухнă тенĕ пулăттăмăр.

Унăн ячĕ пирĕн чĕресенче, ял-йыш, унăн вĕренекенĕсен асĕнче яланах упранĕ. Пурнăçри çутă тĕллевсем пурне те малалла йыхăрччăр, пурнăçланса пыччăр!

**Надежда МИХАЙЛОВА,**
**Тăвай ялĕ.**
**Раиса ШУМОВА хатĕрленĕ**

ÇЫН ТАТА ЗАКОН

# Обществăри йĕркелĕхшĕн

**Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта Тăвайри полици уйрăмне преступленисемпе ытти ĕç хĕл-хĕл çинчен 653 информаци-заявлени пырса кĕнĕ (иртнĕ çулхи çак тапхăрта – 754), çак кăтарту пĕлтĕрхинчен 14,5 процент сахалтарах. Вĕсене пăхса тухса 28 преступление учета илнĕ (пĕлтĕр – 19), ку вăл унчченхинчен 47,4 процент нумайрах.**

Ултă уйăхра 6 преступление чарса лартнă (унччен – 3), çавна май преступленисене уçса парасси 5,6 процент чакнă.

Регистрациленĕ преступленисен 7,2 процентĕ (2 факт) уйрăмах йывăррисен шутĕнчен, 21,4 проценчĕ (6) йывăррисем, 21,4 проценчĕ (6) вăтам йывăррисем, 50 проценчĕ (14) пит йывăррисем мар шутланаççĕ.

Тишкерсен, çакна каламалла, 2025 çулхи çур çулта мăшкăлланă, автомототранспорт е ытти япала вăрланă, хурахла, хулиганла ĕçсем, влаç представителĕсене хирĕçле преступленисене шута илмен. Округра нацисем хушшинчи лару-тăру лăпкă. Терроргла актсем, тĕн тĕлĕшĕнчен хирĕçтăрусем пулман.

Асăннă тапхăрта контактсăр майпа улталаннă 6 тĕслĕхе регистрациленĕ (иртнĕ çул – 5). Информацилле технологисемпе усă курса ултавçăсен аллине укçа куçарасси чакнă, кăçал вăл 245 пин тенкĕпе танлашнă. Пĕлтĕр çак тапхăрта çынсем 511 пин тенкĕлĕх улталаннă. Инкек тÿсекенсене 30 пин тенкине тавăрса пама май килнĕ, 12,2 процент (2024 çулта – 15 пин тенкĕ, 2,9 процент). Чăнах та, паян Интернетпа, банк карттисемпе нумай çын усă курать. Çавăнпа асăрханулла та тимлĕ пулмаллине асăрхаттаратпăр.

Кăçал округ территорийĕнчи шырав ра пулнă 2 преступникрен пĕрне тупма май килнĕ. Унсăр пуçне федераллă шыраври пĕр преступникĕн вырăнне палăртнă. Иртнĕ çултанпах шыраври пĕр хĕрарăма тупайман-ха.

Тăвай муниципалитет округĕн территорийĕнче административлă право йĕркине пăсасси чакнă (2025 çулта – 86 протокол, 2024 çулта 187 пулнă). Çак тапхăрта 34000 тенкĕлĕх штрафланă (2024 çулта – 50660), судпа – 79000 тенкĕ. Йĕркене пăсакансенчен 23400 тенкĕ е 68,82 процент шыраса илнĕ (2024 çулта – 26410 тенкĕ)

Иртнĕ çулхи пекех кăçал та саккунсăр майпа сăмакун юхтарнă тата сутнă 2 тĕслĕх тупса палăртнă.

Кăçалхи январь-июнь уйăхĕсенче РФ КоАПăн 6.1.1 статйипе (хĕненĕшĕн) 17 çын тĕлĕшпе (унччен – 27) административлă ĕç пуçарнă. Саккунна палăртнă штрафсене вăхăтра тÿлемесен, йĕркелĕхе пăсакансем тĕлĕшпе ĕçсене суд приставĕсен службине ярса паратпăр, çапла майпа штрафсене шыраса илме 13 йышăну тунă.

2025 çулхи çур çулта «Урмарский» МО ОГИБДД сотрудникĕсем Тăвай муниципалитет округĕнче административлă майпа право йĕркине пăснă 594 тĕслĕхе регистрациленĕ е иртнĕ çулхинчен 19,3 процент (2024 çулта – 498) нумайрах. Отчетлă тапхăрта 3 çул-йĕр инкекĕнче (пĕлтĕр – пулман) 2 çын вилнĕ тата 2 çын аманнă.

**Вениамин ОБАСЬКИН, «Янтиковское» полици уйрăмĕн начальникĕ, полици подполковникĕ**

«ЧĂВАШ ЕНРИ ХАВАСЛĂ ÇУ КУНĔСЕМ»

# Экскурсире пултăмăр

**Тахçанах ĕмĕтленнĕччĕ Тăвайри халăх музейне çитсе курма. Çуллахи каникул вăхăтĕнче кашни килтех ача-пăча сасси. Хуларан ачасем ялалла килме тăрăшаççĕ. Ялта сывлăш та уçă, пахчара улма-çырла, хăярĕ-помидорĕ, вăрманта çырла-кăмпи... Акă, нумаях пулмасть мăнукăмсем те Шупашкартан çитрĕç. Вĕсене мĕнпе те пулин кăсăклантармалла, вăхăтне усăллă ирттермелле-çке.**

Асли шкула çÿренĕ май, учительсем те интересленеççĕ вĕсен канăвĕпе. Пирĕн çулçÿрев çĕнетнĕ вулавăшран пуçланчĕ. Халĕ, каникул кунĕсенче, ЧР Пуçлăхĕн Олег Николаевăн «Чăваш Енри хаваслă çу кунĕсем» проекчĕпе килĕшуллĕн тăтăшах шкул ачисем пырса çÿреççĕ иккен кунта. Пире Татьяна Манишева библиотекарь ăшшăн кĕтсе илчĕ. Çÿлĕксенчи кĕнекесене тирпейлĕ вырнаçтарнă. Унтах компьютерсем. Библиотекăна çĕнетнĕ хыççăн сăн-сăпачĕ нумай улшăннă. Эпир те вулама 3 кĕнеке илтĕмĕр. Вĕсем çĕнĕ, тин кăна пичетленсе тухнă тейĕн. Кашни залах кĕрсе курчĕç, вăйăсем вылярĕç, çемçе кресло çинче ярăнчĕç мăнуксем. Ӳсĕмне кура пурин валли те ăстăн вăййисем йĕркелеççĕ. Татьяна Владимировна кĕнекесене упрамалли, вăхăтра тавăрса памалли çинчен ăнлантарса пачĕ: «Татах килĕр, кĕтетпĕр»,– тесе ăсатрĕ.

– Тата ăçта каятпăр?

–Краеведени музейне кайса куратпăр, – терĕм мăнукăмсене. Пирĕнпе пĕрле «Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕн тĕп редакторĕ Анжелика Егорова садике çÿрекен хĕр пĕрчийĕпе Аделинăпа пулчĕ. Владимир Федоров заведующи районе миçемĕш çулта пуçланса кайни, паллă çынсен кун-çулĕ çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Кунта кашни экспонат хăйĕн вырăнне тупнă, курса çÿреме питĕ меллĕ, тухас та килмест пысăк та хăтлă залсенчен. Сĕтел-пуканĕсем те ачасене интереслĕ пулчĕç. Паттăрла пуç хунă СВО салтакĕсене асăнса стенд вырнаçтарнă. Ĕлĕкхи хура пÿрт, ача ураписем, сăпкара ачасем выртни, мамонт шăмми, тĕрлĕ кайăксем, лĕпĕшсем, патефон, утюгсем, перо, пианино, ĕлĕхи хут тата вак укçасем, çăпатасем – пурте интереслентерчĕç ачасене.

Мĕн чухлĕ талант Тăвай тăрăхĕнче! Акă, Алексей Семенович Семенов хăй çуралса ÿснĕ Лачкассинчи çуртне тата малтанхи шкул макетне шăрпăк пĕрчисенчен еплерех чаплă пуçтарнă. Тăвай енри малтанхи тата хальхи ертÿçĕсем, музей заведующийĕсем, Вера Кузьминична Кузьмина артистка, «Тăвай кооперативĕ», ытти организаци çинчен пĕлме пулать. Кунтах хÿтĕлев чикки çинчен, пĕрремĕш ачана больницăран илсе тухни, пĕрремĕш туй тата ытти те. Телефонсем çине ÿкерчĕç, музейран тухасшăн та пулмарĕç хула ачисем. Эпир музей заведующине тав туса сывпуллашрăмăр. Вăл пире татах та килме каларĕ.

Çакăн пек музей пурри аякри хăнасемшĕн те, хамăр Тăвай халăхĕшĕн те интереслĕ.

**Марина ФИЛИППОВА**

# Изменения в законодательстве

**1 июля 2025 года в законную силу вступили изменения в 187 статье Уголовного Кодекса Российской Федерации (неправомерный оборот средств платежей).**

**Согласно внесенным изменениям, статья 187 УК РФ дополнена новыми частями 3-6.**

В части 3 указанной статьи уголовно-наказуемым является передача из корыстной заинтересованности клиентом оператора по переводу денежных средств предоставленных ему оператором по переводу денежных средств электронного средства платежа и (или) доступа к нему другому лицу для осуществления таким лицом неправомерных операций.

Часть 4 предусматривает ответственность за осуществление из корыстной заинтересованности клиентом оператора по переводу денежных средств неправомерных операций с использованием электронного средства платежа, предоставленного ему оператором по переводу денежных средств, по указанию другого лица и (или) в интересах такого лица (при отсутствии признаков преступления, предусмотренного статьей 172 настоящего Кодекса).

Часть 5 предусматривает приобретение либо передача другому лицу из корыстной заинтересованности электронного средства платежа и (или) доступа к нему другому лицу для осуществления таким лицом неправомерных операций, совершенные лицом, не являющимся стороной договора об использовании этого электронного средства платежа, заключенного с оператором по переводу денежных средств, либо приобретение таким лицом электронного средства платежа и (или) доступа к нему для последующей передачи другому лицу из корыстной заинтересованности.

Часть 6 предусматривает ответственность за осуществление неправомерной операции с электронного средства платежа, совершенное лицом, не являющимся стороной договора об использовании этого электронного средства платежа, заключенного с оператором по переводу денежных средств (при отсутствии признаков преступления, предусмотренного статьей 172 настоящего Кодекса).

Нужно отметить, что часть 5 и часть 6 указанной статьи относятся к категории тяжких преступлений, за их совершение могут привлечь к уголовной ответственности до шести лет лишения свободы.

Кроме этого лицо, являющееся клиентом оператора по переводу денежных средств, впервые совершившее преступление, предусмотренное частью 3 или 4 настоящей статьи, освобождаются от уголовной ответственности за его совершение, если активно способствовало его раскрытию и (или) расследованию и добровольно сообщило о лицах, совершивших другие преступления с использованием предоставленного ему оператором по переводу денежных средств электронного средства платежа.

Закон обратной силы не имеет, в связи с этим к уголовной ответственности будут привлекаться лица за совершенные преступления указанной категории после вступления изменений в законную силу, то есть с 1 июля 2025 года.

**Наталия КРАСНОВА, временно исполняющая обязанности начальника следственного отделения, майор юстиции**

# Нÿшкассинче пултарулăх касĕ



**Утă уйăхĕ вĕçленчĕ. Çапах та çанталăк улшăнăвне пăхмасăрах пахчара улма-çырла, тĕрлĕ пахча-çимĕç çитĕнет. Вăхăтра варени пĕçермелле. Компот вĕретмелле, хăярпа помидор тăварламалла. Иртнĕ кунсенче, пĕтĕм ĕçе пăрахса Григорий Вакку, Николай Давыдов, Любовь Гордеева – чăвашсен паллă эстрада юрăçисем Нÿшкасси ялне, Елена Андреевна Иванова-Фомина поэтăн пултарулăх каçневаскарĕç. Ялĕ чăнах та питĕ илемлĕ вырăнта вырнаçнă. Йĕри-тавра вăрман ÿсет, ялпа юнашарах – ыраш пусси. Каçхи тÿпере пин-пин çут çăлтăр ялкăшать. Урамĕсем тап-таса. Çурчĕсем питĕ чаплă. Çак илеме курса кашни кун сăвăсем шăрçалать те Елена Андреевна Фомина.**

Кăмăлĕпе питĕ ырă, кăн-кăвак куçлă, хитре кĕлеткеллĕ хĕрарăм, тахçан санитарка пулса ĕçленĕскер, тăвата кĕнеке çырса кăларнă. Сăввисене вуласан кăмăл хăпартланса каять. Чун ыйтнипе, чĕре хушнипе, пуян чĕлхепе çырнă сăвăсене вулама чăнах та питĕ кăмăллă. Пултарулăх каçне клуб тулли халăх пуçтаранннă. Григорий Ваккупа Любовь Гордеева юрăçсем Елена Андреевна сăмахĕсемпе çырнă юрăсене шăрантарчĕç, Шупашкарти 1-мĕш гимназинче ĕçлекен Марина Вакку унăн сăввисене вуларĕ. Хисеплĕ поэта тав туса Григорий Вакку хушпу парнелерĕ. Пултарулăх касĕ питĕ чаплă иртсе кайрĕ. Елена Андреевна та парăмра юлмарĕ. Кашни артиста кучченеç парса ячĕ тата чечек çыххисем парнелерĕ. Эпир Елена Фоминана малашне те сăвăсем çырма хавхалану сунатпăр. Автор калашле, вулакансемшĕн сăвă чĕре хăвачĕ тата ун çуначĕ пултăр.

**Марина СМИРНОВА**

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Чăннипех пурнăç авăрĕнче пулнă

**Галина Германовна Матвеева журналист тата писатель (Вăрмар поселокĕ) Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 80 çул çитнине тата ашшĕ Герман Матвеевич Матвеев журналист 100 çул тултарнине халалласа кăçал, уйăх-уйăх çурă каялла, Шупашкарти «Çĕнĕ вăхăт» типографире «Пурнăç авăрĕнче» ятлă паха кĕнеке кăларчĕ. Ку вăл унăн çиччĕмĕш кĕнеки. Тӳрех калăпăр, усăллă, пуян содержаниллĕ, пурнăçа вĕренме пулăшакан кĕнеке пулса тухнă.**

Вăл Герман Матвеев журналист дневникĕн томĕсенчен, унăн ĕçтешĕсен аса илĕвĕсенчен, Аслă Çĕнтерĕве – 80 çул, пичетпе нихăçан та çыхăнăва татман, архиври документсем, Герман Матвеев çырнă сăвăсем пайсенчен тăрать. Паллах, усă курнă литература списокĕ те пур. Тиражĕ пĕчĕкрех пулсан та, пысăк ĕç тунă Галина Германовна асăннă кĕнекене вулакана сĕнсе. Ачаллах ашшĕ-амăшĕсĕр тăлăха юлнăскер, районти çар комиссариачĕн йышăнăвĕпе вунулттăрах Инçет Хĕвелтухăçĕнчи Хабаровск крайĕнчи ФЗО шкулне вĕренме кайнăскер Герман, темĕнле йывăр пулсан та, хуçăлман, ФЗО шкулне, сăрт-ту техникумне пĕтернĕ. Забойран таврăнсан, вăхăт тупса, дневник, сăвă-калав çырнă, литературăпа интересленнĕ. Тăрăшуллă çамрăка сăрт-ту маçтăрне лартнă. Хăйне пурнăçшăн, обществăшăн усăллă ĕçе хатĕрленĕ. 1946 çулта Инçет Хĕвелтухăçĕнчен таврăнсан, вăл хăйĕн пĕтĕм кун-çулне пичете, радио ĕçне халалланă. Вăрмар, унтан Тăвай район хаçачĕсен редакторĕсенче вăй хунă, хăйсен районĕнче типографипе редакци çурчĕ тутарнă, икĕ районĕнче те радиовещани ĕçĕсене йĕркелесе янă, вĕсен пĕрремĕш редакторĕ те хăех пулнă. Г.М.Матвеев çырнă очерксемпе репортажсем, статьясемпе интервьюсем, фельетонсем вырăнти пичетре çеç мар, республикăри тата центрти хаçат-журналта та кун çути курнă. Çакăнсăр пуçне вăл общество ĕçне те тӳрремĕнех хастар хутшăннă. Вăрмар çĕрĕн мухтавлă ывăлĕн пирĕн районта та, хăйсен тăрăхĕнче те ĕçпе çитмен ял, колхоз-совхоз е, тĕрĕсрех каласан, ура пусман кĕтес юлман пулĕ. Мĕнле вăйхал çитернĕ-ши, хăçан каннă-ши вăл тесе те шухăшлатăн. Вăл уй-хире, фермăсене, промышленноç предприятийĕсене, мероприятисемпе тĕлпулусене васканă. Пулни-иртнине пичетре çутатнă, хăйĕн дневникĕнче çырса кăтартнă, унăн дневникĕсем пурнăç летописĕн тĕкĕрĕ, тĕлĕнмелле пуянлăх пулса тăнă. Çын, паллă, пурне те асра тытаймасть, дневник вара йăлтах куç умне кăларать. Унта çырнисем тăрăх, çĕр-çĕр хушамата, çĕршыв, республика, район историйĕнчи паллă пулăмсене куç умне кăларатăн. Пĕтĕмпех алă тупанĕ çинчи пек. Герман Матвеевич хăй ĕçлесе пурăннă çулсенче такама та палланă, такампа та çыхăну тытнă, ăна хăйне те республика ертӳçисем таранах пĕлнĕ. Хăйне кĕске ĕмĕр ĕмĕрлеме шăпа пӳрнĕ пулсан та, Герман Матвеевич хăй хыççăн тарăн йĕр хăварнă, вăл паянхи яш-кĕрĕмшĕн те çул маякĕ пекех çуталса тăрать, хăйĕн тĕслĕхĕпе нумайăшне ыра витĕм кӳрĕ. «Халăхшăн, тăван çĕршывшăн ĕçлесе пурăнасси – маншăн чи хакли. Эпĕ – халăх ывăлĕ, тăван çĕршыв гражданинĕ»,– тесе çырнă дневникĕнче. Ахальтен мар хăйĕн кĕнекинче Галина Германовна дневникри йĕркесене, унта çырнисене пысăк вырăн панă. Пурнăçра Герман Матвеев нихăçан та канлĕх курман, шыраман та ăна. Вăл кирек мĕнле ĕçе те пысăк яваплăхпа пурнăçланă. Патриот-журналистăн пурнăçра пĕр тĕллев пулнă: «Малалла кĕрешсе – çĕнтерӳ патне». Ашшĕн çак тĕллевне Галина Германовна уçăмлă уçса панă. Сăмах майăн каласан, кĕнекене Герман Матвеевич пирки Иван Иванович Соловьевпа эпĕ аса илсе çырнисене те кĕртнĕ. Кĕнеке сăн ӳкерчĕксенчен питĕ пуян. Çакă та историллĕ нумай пулăма тарăнрах çутатса парать, уçăмлатма пулăшать.

**Иван ГЛАДКОВ**

## Ăшшăн саламлатпăр

Август уйăхĕн пĕрремĕшĕнче Турикас Тушкил ялĕнче пурăнакан юратнă мăшăр, тĕнчери чи лайăх анне, лăпкă асанне, çепĕç кукамай, хисеплĕ кӳршĕ, сумлă ял çынни **Ольга Васильевна Николаева** хăйĕн 85 çулхи çуралнă кунне паллă тăвать.



Ольга Васильевна пысăк çемьере çуралса ӳснĕ май çамрăклах ĕçре пиçĕхнĕ. Ялти шкулта çичĕ класс пĕтернĕ хыççăн фермăна вырнаçнă та мĕн пенсие тухиччченех дояркăра тата пăру пăхаканра ĕçленĕ.

Мăшăрĕпе Николай Николаевичпа юратса та килĕштерсе хăйсен ачисемпе тата мăнукĕсемпе киленсе пурăнаççĕ.

Хамăрăн кăмăллă та ырă чунлă Ольга Васильевнана чаплă юбилейĕпе саламлатпăр. Чунпа ялан çамрăк, кăмăлпа савăк пулма сунатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, ĕмĕтӳсем пурнăçланса пыччăр. Эсĕ – пирĕн чун тĕрекĕ, хумсăр çыран хĕрри, пирĕн хĕвел те пурнăç çăлкуçĕ. Яланах савăнăçа пĕрле пайлатăн, хурлăха сирсе яма пĕлетĕн. Пурнăçра кулянмалли нумай пулчĕ пулин те, малашне лайăххи кăна пултăр. Каçарăр пире час-часах килсе çӳрейменшĕн, кирлĕ чух вăхăт тупса çитейменшĕн. Эпир сире юрататпăр, ыррине кăна сунатпăр.

**Ăшă салампа – мăшăрĕ, 5 ачи, кинĕсемпе кĕрӳшĕсем, 13 мăнукĕ, 5 кĕçĕн мăнукĕ, хăтипе тăхлачисем, пĕтĕм тăванĕсемпе кӳршисем.** 0884

## Кабачок нимĕрĕ

**Аш арманĕ витĕр 5 кг кабачок, 1,5 кг сухан, 1,5 кг кишĕр, 1,5 кг тутлă пăрăç, 2 кг помидор кăлармалла.**

Пурне те пĕрлештермелле, 7 кашăк тăвар, 300 г сахăр ямалла. Çулăм çине лартса 1-1,5 сехет пĕçермелле. Хатĕр пулас умĕн 6 кашăк 9 процентлă уксус, 150 г ыхра, тутă кĕмелĕх хаяр пăрăç хушмалла. Стерилизациленĕ банкăсене тултарса хупмалла.





**Военный комиссариат по г. Канаш, Канашскому и Янтиковскому районам Чувашской Республики:**
**г. Канаш, ул. Полевая, 18**
**Телефон дежурной части: 8 (835 33) 4-18-21**
**Инструктора пункта отбора на военную службу по контракту**
**Андреев Иван Альбертович 8-952-027-51-12**


ОБРАЗОВАНИЕ НАЦИОНАЛЬНЫЕ ПРОЕКТЫ РОССИИ

# Чăн-чăн учителĕн тĕслĕхĕ

**Çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче Тушкил шкулĕнче 43 çул ачасене пĕлӳ тата воспитани парас ĕçре вăй хунă Раççей Федерацийĕн шкулĕн тава тивĕçлĕ учителĕ Василий Ефимович Ефимов çуралнăранпа 85 çул çитрĕ.**

Василий Ефимов Шупашкар районĕнчи Анат Кинер ялĕнче 1940 çулта çуралнă. 1964 çулта Чăваш патшалăх педагогика институчĕн историпе филологи факультетне пĕтернĕ хыççăн ăна Тушкилти сакăр çул вĕренмелли шкула вырăс чĕлхи вĕрентме яраççĕ. Педагогика ĕçĕнчи пĕрремĕш утăмĕсене вăрçă çулĕсенче пиçĕхнĕ учительсемпе пĕрле тунă. Апла пулин те çамрăк учитель коллективра çухалса кайман, хăйĕн пултарулăхне, ачасемпе ĕçлессине тĕрĕс йĕркелеме пĕлнине кура часах пĕрле ĕçлекенсен хисепне тивĕçнĕ. Василий Ефимович 1970–1979 çулсенче директорăн вĕренӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕнче тăрăшнă. Хăйĕнпе пĕрле 1964 çулта ĕçлеме пуçланă, 1966 çултанпа директорта ĕçленĕ Николай Петрович Петровпа вĕсем Тушкил шкулĕн ятне çӳллĕрех шая çĕклес тесе сахал мар вăй хунă. 1974 çулта çĕнĕ шкул çуртне хута янă хыççăн чăнах та Тушкил шкулне çĕнĕ варкăш кĕнĕ, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕсене йĕркелеме майсем самай ӳснĕ.

Кунта чи малтан ачасемпе çамрăксен пĕрлешĕвĕсем хăватлăн аталанма пуçлаççĕ. Учительсен коллективĕ çамрăк специалистсемпе пуянланать. Шкул çĕнĕ вĕренӳ хатĕрĕсем, спорт инвентарĕ туянма май тупать. Паллах, çамрăк учительсен ĕçне, ачасен шкул тулашĕнчи пурнăçне, çĕнĕ вĕренӳ хатĕрĕсене ĕçе кĕртсе туллин усă курассине йĕркелесе пырасси ытларах директор çумĕн ăсталăхĕнчен, учительсен тата ачасен коллективĕпе ĕçлессине пĕлсе те тĕрĕс йĕркеленинчен нумай килнĕ. В.Е.Ефимов çак ĕçе çав тери лайăх пурнăçласа пыма пултарнă.



1979 çултан Василий Ефимович ачасен класс тата шкул тулашĕнчи ĕçне йĕркелесе пыма пуçлать. Çакăнтан пултаруллă педагогăн ĕçĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланать. Тăхăр çул хушшинче шкулти пионерсен пĕрлешĕвĕ çичĕ хутчен комсомолăн районти комитечĕ паракан сылтăм флангрисен (чи пултаруллисен) лентине илме тивĕçлĕ пулнă. 1980 çулта О.Кошевой ячĕпе хисепленекен дружинăна Пĕтĕм Союзри В.И.Ленин ячĕллĕ пионер организацийĕн Хисеп грамотине панă. Шкулти комсомол организацине вара икĕ хутчен ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн вымпелĕпе чыс тунă.

Уйрăммăн илсен, В.Е. Ефимовăн ĕçĕнче ача-пăча туризмне аталантарнине палăртса хăвармалла. 1969 çултанпа вăл ертсе пынипе шкул команди районта иртекен ăмăртусенче 18 çул хушши яланах çĕнтерӳçĕ е призер пулнă. Республикăра иртекен ăмăртусенчен вара кашнинчех тĕрлĕ хаклă парнесемпе таврăннă. Çак вăхăтра шкулта Василий Ефимович вуншар пултаруллă турист хатĕрленĕ. Вĕсем халĕ те шкулта хăнăхнă туризм пултарулăхне манмаççĕ, округра тата республикăра иртекен тĕрлĕ ăмăртусене хутшăнаççĕ.

Туризмпа краеведени пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Василий Ефимовичăн тепĕр пысăк ĕçĕ – тăван тавралăха, унăн историне тарăннăн тишкерсе тĕпчени, пухнă пĕлĕве ачасемпе халăх патне çитерме тăрăшни. Вăрçă ветеранĕпе, шкулта чылай çул истори учителĕнче ĕçленĕ М.А.Орловпа пĕрле çине тăнипе 1985 çулта Çар Мухтавĕн пӳлĕмĕ, 1994 çулта краеведени музейĕ уçăлать. Çак калама çук калăпăшлă та пархатарлă ĕçĕн тĕп шăнăрĕ каллех Василий Ефимович пулнине палăртмалла. Музейра вырнаçтарнă нумай материала вăл майласа калăпланă. Вăлах Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă ентешсен картотекине туса хатĕрленĕ, пуçтарнă материала пĕтĕмлетсе компьютерпа пичетлесе калăпланă кĕнеке туса хатĕрленĕ.

1988 çултан В.Е. Ефимов вырăс чĕлхипе литературине вĕрентес ĕçе кӳлĕнет. Кунта та вăл лăпланса లармасть. Тĕрлĕ классенче усă курма диктант пуххисем çырса хатĕрлет, радиоэлектроника, фото кружокĕсем ертсе пырать, класс ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçласа ачасен аслă юлташĕ, канаш паракане, пурăнма вĕрентекенĕ пулса тăрать. Шкула ĕçлеме килекен çамрăк педагогсемшĕн ĕçре пулăшса пыракан, кирлĕ канаш паракан, чăнчăн учитель тĕслĕхĕ пулать. Çав вăхăтрах пĕтĕм ял халăхĕшĕн виçесĕр хаклă материал хатĕрлеме те вăхăт тупать Василий Ефимович. 1990 çулта вăл Тушкил шкулĕн историйĕпе кăсăкланать. 1994 çулта «Тушкил шкулĕн историйĕ çинчен çырнă очерксен пуххи» («Очерки по истории Шимкусской школы») ятпа каллех хăй тĕллĕн калăпланă кĕнеке хатĕрлет. Çав вăхăтрах Тушкилти тата Ямпулатри шкулсенче 1882 çултан пуçласа 2012 çулччен ĕçленĕ учительсем çинчен материал пуçтарса кĕнеке янтăлать. Паллах, унăн кĕнекисем пĕри те издательствăра пичетленсе тухман. Анчах та вĕсем Тушкил шкулĕшĕн виçесĕр хаклă япаласем.

В.Е. Ефимов 2007 çулта хисеплĕ канăва кайнă хыççăн та нумай ĕçленĕ, тĕпчевĕсене пуянлатнă, тӳрлетнĕ. Тушкил ялĕнче е шкулĕнче иртекен тĕрлĕ мероприятисене хутшăннă. 2023 çулхи çу уйăхĕн вĕçĕнче пирĕн класс ертӳçи Василий Ефимович Ефимов пурнăçран уйрăлнă. Анчах та халăх ун ятне нумай-нумай çул хушши асра тытса пурăнĕ. Унăн вĕренекенĕсем юратнă учителĕ вĕрентнисене пурнăç тăршшĕпе асра тытĕç.

**Валерий ПЕТРОВ,**
**Тушкил шкулĕ.**
**1996 çулхи выпускниксем**

-2

## Ăшшăн саламлатпăр



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – юратнă аннене, асаннене, кукамая, Çĕнĕ Пуянкасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, çав ялтах пурăнакан **Зоя Александровна Яковлевана** августăн 1-мĕшĕнчи 85 çулхи сумлă юбилейĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе, чи ырă туйăмсемпе саламлатпăр. Нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, телей сунатпăр.

Пирĕн анне нумай çул «Социализм» совхозра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă. «Ĕç ветеранĕ» медале те тивĕçнĕ. Мăшăрĕпе, Александр Иванович Яковлевпа, пилĕк ача çуратса ӳстерчĕç вĕсем. Шел, атте вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ пирĕнтен.

Тавах, аннемĕр, пире кун-çул парнеленĕшĕн, юратнăшăн, тĕрĕс çул çине тăратнăшăн. Эпир санпа мухтанатпăр. Тата нумай çул пурăн эсĕ, пире савăнтарса. Ан чирле, ан ватăл, Турри сана вăй-халне парсах тăтăр.

Килсех тăччăр-çке паллă кунсем,
Саламлаччăр сире ыр çынсем.
Чи пахи – ăш пиллĕ сăмах,
Чи кирли – çирĕп сывлăх, паллах.

**Ăшă салампа – хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕсемпе кинĕсем, 12 мăнукĕ, 8 кĕçĕн мăнук.** 0850



Савнă хĕрĕме, мăшăра, пире пурнăç парнеленĕ юратнă аннемĕре, хаклă йăмăка, тăвана тата тус-юлташа Тăвайĕнче пурăнакан **Наталия Ивановна Петрована** августăн 4-мĕшĕнчи 50 çулхи юбилейĕпе ăшшăн саламлатпăр. Кун-çул сукмакĕпе хавхаланса утма, ыррипе киленсе, чĕре савăнăçне туйса пурăнма сунатпăр.

Тушкил хĕрĕ çемье телейне Тăвайри маттур каччăпа Сергей Алексеевичпа çыхăнтарса хĕрпе ывăл çитĕнтернĕ. Вĕсене аслă пĕлӳ парса вĕрентсе кăларса пурнăç çулĕ çине тăма пулăшнă. Хăйсен вăйĕпе Тăвай ялĕнче «Для Вас» парикмахерски уçнă, 25 çул ĕнтĕ пирĕн хисеплĕ юбиляр çынсене хаваслă кăмăл-туйăм, илемлĕх парнелет.

Наталия Ивановна регионти хĕрарăм-ертӳçĕсен конкурсĕнче лауреат пулса тăнă, республика ертӳçи Тав çырăвĕпе чысланă ăна. Саншăн савăнатпăр, санпа тивĕçлипех мăнаçланатпăр эпир. Малашне те хăвăн ылтăн аллусемпе, çепĕç куллупа çынсене савăнтарса тăмалла пултăр.

Эсĕ йышлă тăванусемпе шăкăл-шăкăл пурăнса, пулăшса тăма та мехел çитеретĕн. Эсĕ пирĕн кун-çула çутатса, ăшăтса тăратăн. Ӳлĕмрен те çапла харсăр пул. Турри упраса, вăй-хăват парса тăтăр.

Пурнăç уттинчен ан юл,
Умра вырттăр такăр çул.
Ялан сывлăхлă эс пул,
Сывлăх вăл – чи хаклă мул!

**Ăшă салампа – амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕпе ывăлĕ, аппăшĕн çемйи, Якимовсемпе Стрелковсем, ытти тăванĕсем.** 0821



Юратнă та хаклă çыннăмăра, Енĕш Нăрваш ялĕнче пурăнакан **Олег Лукич Григорьева** Иллен кунĕнчи, августăн 2-мĕшĕнчи, 55 çулхи юбилейĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Тĕнчере мĕнпур ыррине сунатпăр. Кашни килекен çĕнĕ кун савăнăçпа тултăр, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçланччăр. Турă панă кунçулу вăрăм, сывлăху çирĕп пултăр.

Вăл шкулта вĕреннĕ чухнех тракторист правине илнĕскер нумай çул «Красная Чувашия» колхозра механизаторта вăй хунă. Халĕ «Акконд-агро фирмăра» хăй юратнă ĕçĕнче тӳрĕ кăмăлпа тăрăшать. Хастарлăхĕшĕн ЧР ял хуçалăх министерствин, ытти шайри Хисеп грамотисемпе чысланă ăна.

Мăшăрĕ Альбина Анатольевна та маттур, «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Ялти хресчен-фермер хуçалăхĕн ĕне ферминче тăрăшать халĕ. Килти хуçалăхĕ çирĕп, картиш тулли выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп. Пур çĕре те ĕлкĕреççĕ. Куллен ĕçре пулсан та ыттисене пулăшма вăхăчĕсем пур вĕсен. 95 çулхи амăшĕ вĕсен хӳттине туйса тăрать. Икĕ ывăлĕ те пушар чаçĕнче тăрăшаççĕ. Асли çемьеллĕ. Икĕ мăнукĕпе киленеççĕ ăш пиллĕ асаттепе асанне. Юбилей хыççăн тепĕр эрнерен кĕçĕннине авлантарса туй кĕрлеттересшĕн.

Юбилей ячĕпе сана, пирĕн хисеплĕрен те хисеплĕ Олег Лукич! Ĕçре яланах ăнăçса пытăр, çывăх çынсен юратăвĕ вăй-хăват кӳтĕр. Эсĕ юнашар пурри – чи пысăк телей, чи хаклă пуянлăх. Пурнăçра йăлт ырă, хитре, таса пултăр. Кун-çул тăршшĕпех телей курса пурăн.

**Ăшă салампа – амăшĕ, мăшăрĕ, пĕр тăванĕсен çемйисем, хунямăшĕпе хуняшшĕ, икĕ ывăлĕ, кинĕ, 2 мăнукĕ, хăтипе тăхлачи.** 0874



Пирĕн чи çывăх та хаклă çыннămăр – юратнă мăшăр, атте, шăллăм, кукка, хисеплĕ тăван Улянкă ялĕнче пурăнакан **Геннадий Владимирович Осипов** утă уйăхĕн 29-мĕшĕнче 50 çул тултарчĕ. Паллă юбилей ячĕпе чĕрери чи ырă та çепĕç туйăмсемпе ăшшăн саламлатпăр.

Тĕнчери мĕнпур ыррине сунатпăр сана, хаклă çыннăмăр. Хурçă пек çирĕп сывлăхлă, çăлкуç таппиллĕ иксĕлми вăй-халлă, вăрăм ĕмĕрлĕ пул. Турă нумай çул пурăнма иксĕлми хăват патăр сана! Пурнăçри кашни утăму юратупа, пурнăçланнă ĕмĕтсемпе тултăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кĕрекӳ сана хисеплекен, юратакан çынсенчен ан татăлтăр. Яланах çамрăк пул, пире хăвăн ырă та уçă кăмăлупа савăнтарса пурăн. Куçунтан пурнăç хавасĕ ан татăлтăр. Тавах сана эс пурришĕн, пире яланах ăнланнăшăн.

Эпир сана чун-чĕререн юрататпăр, хисеплетпĕр, эс пурришĕн савăнатпăр!

Çул хыççăн çул иртсе хыçа юлсан та
Эс уншăн ан кулян, ан пăшăрхан,
Пул сывлăхлă ялан, çапла пулсассăн
– Укçаллă этемрен те эс пуян.

**Хисеплесе те юратса – мăшăрĕ, хĕрĕ, аппăшĕн çемйи, тăванĕсем** 0882

## ТАВ ТĂВАТПĂР



Утă уйăхĕн 25-мĕшĕнче пирĕн çемьесене чăтма çук йывăр хуйхă пырса çапрĕ. Тăвай ялĕнче пурăннă, пирĕншĕн чун тĕрекĕ пулнă аттен, кукаçин, тăванăн **Станислав Георгиевич Филипповăн** ырă чĕри сасартăк тапма чарăнчĕ.

Кун хыççăн кун иртнĕ май тăванĕсене, кӳршĕсене, ял-йыша, ĕçтешĕсене, пĕлĕшĕсене тĕрлĕ ĕç туса пулăшнă вăл ялан. «Ылтăн алăллă, ырă кăмăллă Славик»,– тетчĕç ун пирки тăвайсем.

Станислав Георгиевич ятарлă пĕлӳ илсен Тăвайри линипе техника цехĕнче электромонтер ĕçĕсене тивĕçлĕ канăва кайиччен тӳрĕ кăмăлтан пурнăçланă. Иртнĕ çул вĕçĕнче «Аль» спорт шкулĕнче хуралта ĕçлеме пуçланă.

Пысăк хуйхăна чăтса ирттерме тата юлашки çула ăсатма пулăшнă тăвансене, ратне çыннисене, ял-йыша, пĕрле выляса ӳснĕ, шкулта вĕреннĕ юлташĕсене, Тăрмăш, Чутей ялĕсенчи чиркӳсен пачăшкине Леонид аттене, хисеплесе пынă мĕнпур çынна эпир чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр. Ырлăхлă-сывлăхлă, вăрăм кун-çуллă пулăр. Турă хăйĕн хӳтлĕхне илтĕр сире пурне те.

**Икĕ хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.** 0899

## Ăшшăн саламлатпăр



Ыран, çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче, пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăрсен çуралнă кунĕсем: **Владимир Петрович Капитонов** 70 çул тултарать, унăн мăшăрĕ **Лидия Николаевна** – 69 çул.

Иккĕшĕ те Тăрмăшра йышлă çемьесенче çуралнă, ашшĕ-амăшĕсем колхозра тăрăшнă май вĕсемпе пĕрле ĕçре пиçĕхсе ӳснĕ. Владимир Петрович механизаторта вăй хунă, трактористсен бригадине ертсе пырса, колхозри уй-хир ĕçĕсене вăхăтра йĕркелесе туса пынă. Тăвай больницин врач-терапевчĕ Лидия Николаевна ĕмрипех çынсен сывлăхĕшĕн тимленĕ, паянхи кун та вăл УЗИ специалисчĕ.

Владимир Петрович çамрăклах спортпа туслă пулнă, нумай çул ялта спорта, уйрăмах футбола, аталантарма тимленĕ, формăпа, транспортпа тивĕçтернĕ, стадион тунă.

Ĕçчен мăшăр халăх çинче пысăк хисепре, патшалăх та вĕсен ячĕсене çӳллĕ шая çĕкленĕ. Владимир Петровича «Чăваш республикин тава тивĕçлĕ механизаторĕ», Лидия Николаевнана «Чăваш республикин тава тивĕçлĕ врачĕ» хисеплĕ ятсемпе чысланă.

Юбилярпа мăшăрĕ икĕ хĕр те пĕр ывăл çуратса ӳстерсе, вĕрентсе кăларнă, ура çине тăратса çемьеленме пулăшнă. Халĕ вĕсен 6 мăнукĕпе киленсе кăна пурăнмалла ĕнтĕ.

Хамăрăн чунтан юратнă та хисеплĕ Владимир Петровичпа Лидия Николаевнана çуралнă кунĕсен ячĕпе чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, çăлкуç таппиллĕ вăй-хал, телей сунатпăр. Хуйхă-суйхă, чир-чĕр сирĕлсе тăччĕр, кил-çуртра ача-пăча сасси ан татăлтăр, Турă вăрăм кун-çул парнелетĕр сире.

**Ăшă салампа: ачисемпе мăнукĕсем, кинĕпе кĕрӳшĕсем, хăтисемпе тăхлачисем, тăванĕсемпе тус-юлташĕсем.** 0895


Утерянный аттестат о среднем общем образовании А-847084, выданный 18 июня 1992 года Чутеевской средней школой на имя **Кабартовой Ираиды Геннадьевны**, считать недействительным. 0883

0872 КУПЛЮ чеснок. Т. 8-9373918833

0893 Куп. коз, овец на мясо. Т. 8-9083059815

0871 Ĕне сутатăп. Т. 8-9083028640

0694 ПРОДАЮ поросят. Дост. Т. 8-9373964773 6-5

2206 КУП. КОЗ, ОВЕЦ, БЫЧКОВ Т. 8-9278508564 25-19

0151 НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ. Т. 8-9279985488. Володя. 11-11

0321 ПЕСОК. ЩЕБЕНЬ. ОПГС. Т. 8-9061333944 22-9

0296 ПЕСОК. ГРАВМАССА. ЩЕБЕНЬ. НАВОЗ. От 3-х тонн. Т. 8-9523106871 11-7

2027 КУПЛЮ бычков, коров, телок. Т. 8-9370160057 28-6

0894. ПРОДАЮ прицеп мотоблока, самосвал. Т. 8-9523134904

0885. ПРОДАЮ земельный участок с постройками. Западная 14. Т. 8-9050271806

0657, 0768 БУРЕНИЕ колодцев, Ж/б колец. Доставка. Т. 8-9603061972 8-9083070995 5-5

0902 Ремонт холодильников, стир. машин. Т. 8-9279955504 3-1

0320 ПЛАСТ. ОКНА. Качественно с установкой. Т. 8-9656867950 11-9

0303 ПЛАСТ. ОКНА и двери остекл. Балконов по низким ценам от произ.-ля. Качество. Гарантия. Скидки. Т. 8-9603031551 13-9

0793 ДРОВА (колотые, метровые). Доски: хвоя, береза, осина. Сруб. Т. 8-9373944344, 8-9278423391 25-4

0804 Строительство и ремонт любых видов работ: домов, бань, квартир, заборы, кровли из нашего или вашего материала, пенсионерам скидки. Т. 8-9093669666, 8-9613788957 3-3

0180 « ЭЛЕКТРОПАСТУХИ» На любую площадь. Есть доставка. Выгодные цены. Машинки для стрижки овец. Т. 8-9613472140 11-2

0881. Продам поликарбонат сотовый прозрачный/цветной. 1800 руб. Доставка бесплатная. Оплата при получении. Т. 8-9774878497 10-1


Хаклăран та хаклă çыннăмăр – юратнă атте, кукаçи, шăллăм, пичче, хăта, Тăрмăш ялĕнче çуралса ӳснĕ, Тăвай ялĕнче пурăннă, «Аль» спорт шкулĕнче хуралта ĕçленĕ

**Станислав Георгиевич**
**ФИЛИППОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки чун-чĕререн хурланса пĕлтеретпĕр.

Унăн çутă сăнарĕ пирĕн чĕресенче ĕмĕрлĕхех упранĕ.

**Хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем, пĕртăванĕсемпе вĕсен ачисем.** 0898


"Ял ĕçченĕ" ("Сельский труженик")

Тĕп редактор А.Е.ЕГОРОВА

Учредительсем – Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Ен цифра аталанăвĕпе информаци политикин министерствин «Тăвай районĕн «Ял ĕçченĕ» хаçат редакцийĕ» ХТУ

Хаçата çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмне тĕрĕслесе тăракан федераллă службăн Чăваш Республикинчи – Чăваш Енри Управленийĕ 2012 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00239 №-пе регистрациленĕ.

Хаçат эрнере 1 хут (эрнекун) чăвашла (хăш-пĕр материалсем вырăсла) тухать.

Пичете панă 31.07.2025 ç. 19.00, графикпе 19.00 сех.

Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ тата каялла тавăрса памаççĕ. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн редакци явап тытмасть. Реклама материалĕсен палли – Р

Номершĕн яваплă дежурнăй Р.В.ШУМОВА

Компьютерпа калăплакан: А.Е.ЕГОРОВА

Хаçата районти "Ял ĕçченĕ" хаçат редакцийĕнче наборласа верстккăланă, "Чăваш Ен" ИПК" АУ типографийĕнче пичетленĕ. Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт. Çырăнтару индексĕ – ПР 238. Калăпăшĕ – 1 пичет листи. Тираж – 1390 Заказ

Редакципе издатель адресĕ: 429290, Чăваш Республики, Тăвай ялĕ, Ленин проспекчĕ, 11-мĕш çурт.

Телефонсем: тĕп редактор – 2-11-10, обществăпа политика, экономика пурнăçĕн тата çырусен пайĕсем – 2-14-05, яваплă секретарь тата наборпа верстка пайĕ – 2-13-10, бухгалтери – 2-15-64. Электронлă почта: smi11@cap.ru